26-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1943 ИЮЛЬ 28 ЮНКУН 151(6388) №

Чăваш Коммуни

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр.

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

Çурçěр Флочěн Çар Советне

Головкăна
Николаева

Çурçěр Флочě вунă çул тултарнă ят па командирсене тата краснофлотецсене саламлатăп, нимěç захватчикěсене хир ěç пыракан кěрешӳре çěнě çитěнӳсем тума ырă сунатăп.

СТАЛИН.

ВКП(б) Обкомěнче

Çак кунсенче ВКП(б) Чăваш Обкомěн бюровě Элěк районěнчи «Майăн 1-мěшě» колхозпа Шупашкар районěнчи «Крахмал» колхозăн тырпулсене пухса кěртмелли ěç планěсем çинчен сӳтсе яврě.

Кăçалхи июлěн 6-мěшěнче «Чăваш Коммуни» хаçат редакцийě Элěк районěнчи «Майăн 1-мěшě» ялхуçалăх артелěн тырпулсене пухса кěртмелли ěç планне пичетлесе кăларчě. Çак планра пысăк йăнăшсем чылай. Сăмахран, вăл планра тырă вырма тухнă хыççăн улттăмěш кунěнче кăна авăн çапмашкăн тытăнма палăртнă. Çав вăхăтрах СССР Совнаркомěпе ЦК ВКП(б) «1943 çулта тырпулсене пухса кěртесси тата ялхуçалăх продукчěсем хатěрлесси çинчен» йышăннă постановленире кăтартнă тăрăх, пур колхозсен те тырă вырма тухнă хыççăн пиллěкмěш кунěнчен кая юлмасăр авăн çапма тытăнмалла. Ěç планěнче кěр тыррисене унěйкăпа 6 кун çеç вырма палăртнă, çав вăхăтрах кěр тыррисене вырас ěç 8 кун хушши пырать. Уборка вăхăтěнче ěç кунěпе май пур таран туллинрех усă курас вырăнне, апат çиме колхозра пěтěмпе 5 сехет ытла вăхăт уйăрса панă. Уборкăри чылай ěçсен нормисем пěчěккě. Сăмахран, кěреплелě çавасемпе пěр çынăн 0,25 гектар çулмалла. Тырра çавапа çулнă чухне кашни гектар çине 8 çын тăратма палăртнă, çав çынсенех кěлтине те çыхмалла. Ěç нормисем çакăн пек пěчěккě пулнă пирки, тырра çавапа çулни çурлапа вырнинчен нимěн чухлě те уйăрăлса тăмасть. «Майăн 1-мěшě» колхозăн ěç планěнче тăккаланчăксемпе кěрешмелли тата тырпула сыхласа усрамалли ěçсене пачах та палăртса хуман. Çавăн пекех тата колхозпа колхозниксен ěне-выльăхěсене хирте тата турттарас ěçсенче кӳлсе ěçлеттерессине те планра палăртман.

ВКП(б) Обкомěн бюровě çавăн пекех тата Шупашкар районěнчи «Крахмал» колхозăн ěç планěнче те чылай пысăк çитменлěхсем пуррине палăртрě. Вăл плана кăçалхи июлěн 10-мěшěнче «Красная Чувашия» хаçатра пичетлесе кăларнă. Çак колхозăн ěç планěнче кěреплелě çавапа çулнă хыççăн кěлте çыхассине палăртса хуман. 6 лашапа ěçлекен молотилкăна ěçлеттерме 3 лаша çеç уйăрса панă. Çавăн пекех тата тырпулсене пухса кěнě çěрте ěне-выльăхсемпе усă курассине палăртман.

ВКП(б) Обкомěн бюровě «Чăваш Коммуни» хаçат редакторне Яковлев юлташа вăл Элěк районěнчи «Майăн 1-мěшě» колхозăн ěç планне хаçатра пичетлесе кăлариччен тěплěн пăхса тухманни çинчен асăрхаттарчě, партин Элěк райкомне çав ěç планне тепěр хут пăхса тухса, СССР Совнаркомěпе ЦК ВКП(б) 1943 çулта тырпулсене пухса кěртесси тата ялхуçалăх продукчěсем хатěрлесси çинчен йышăннă постановленипе пěтěмěшпех килěшӳллě тума хушрě. Çавăн пекех ВКП(б) Шупашкар райкомне те «Крахмал» ялхуçалăх артелěн ěç планěнчи йăнăшсене тӳрлетме хушрě.

ВКП(б) Обкомěн бюровě парти райкомěсен секретарěсене, райисполкомсен председателěсене колхозсен тырпулсене пухса кěртмелли ěç планěсене тěрěс туни тěрěс мар туннине пăхса тухма, вěсене СССР Совнаркомěпе ЦК ВКП(б) «1943 çулта тырпулсене пухса кěртесси тата ялхуçалăх продукчěсем хатěрлесси çинчен» йышăннă постановленипе пěтěмěшпех килěшӳллě тума хушса хăварчě.

Чăваш АССР Совнаркомěнче

Чăваш АССР-ěнчи финоргăнсен 1943 çулхи иккěмěш кварталти социализмлă ăмăртăвěн итогěсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомě республикăри финоргăнсен 1943 çулхи иккěмěш кварталти социализмлă ăмăртăвěн итогěсене пăхса тухса, Калинино районěнчи финотдел (райфинотдел заведующийě Иванов юлташ, райсовет исполкомěн председателě А. Иванов юлташ) ăмăртура çěнтернě тесе йышăннă. Ана Чăваш АССР Совнаркомěн куçса çӳрекен Хěрлě ялавне тата пěрремěш преми (7 пин тенкě) памалла тунă.

1943 çулхи иккěмěш кварталти социализмлă ăмăртăвăн итогěсем тăрăх Çěнтěрвăрри райфинотделě (райфинотдел заведующийě Анкудинов юлташ, райсовет исполкомěн председателě Маклашкин юлташ) иккěмěш вырăна тухнă, Совнарком ăна иккěмěш премипе 5 пин тенкě укçа памалла тунă.

Чăваш АССР Совнаркомě, 1943 çулхи иккěмěш кварталти социализмлă ăмăртăвăн итогěсем тăрăх Çěрпӳ районěнчи финотдел (заведующийě Павлов юлташ, райсовет исполкомěн председателě Хабаров юлташ) ăмăртура виççěмěш вырăна тухнă тесе йышăнса, ăна виççěмěш преми (3 пин тенкě) памалла тунă.

Çавăн пекех Совнарком кăçалхи иккěмěш кварталта тупăшсен планне пурнăçлас тěлěшпе Красноармейски, Шупашкар, Советски, Шăхасан райфинотделěсем тата Шупашкар, Çěмěрле горфинотделěсем лайăх ěçленине палăртса хăварнă.

Кунсăр пуçне, Совнарком налог, государство страхованийě енěпе, пурнăçчен ытла халăха ирěклěн сберкассăна укçа хывтарас енěпе Пăрачкав, Хěрлě Чутай, Çěмěрле, Куславкка, Йěпреç, Чкаловски райфинотделěсем начар ěçленине палăртнă.

Совнарком Наркомфина, райсовет, горсовет исполкомěсен председателěсене, райфо тата горфо заведующийěсене виççěмěш кварталта бюджет планне пурнăçлама тивěçлě мерăсем йышăнма хушса хăварнă.

Пурăнмалли çуртсен тата коммуналлă предприятисен социализмлă ăмăртăвěн 1943 çулхи май тата июнь уйăхěсенчи итогěсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомě пурăнмалли çуртсемпе коммуналлă предприятисен социализмлă ăмăртăвěн 1943 çулхи май тата июнь уйăхěсенчи итогěсене пăхса тухса, Çěмěрлери коммуналлă прачечнăй тата Çěрпӳри коммуналлă парикмахерски ăмăртура мала тухнă тесе йышăнчě.

Çěмěрлери коммуналлă прачечнăй май тата июнь уйăхěсенче кěле çăвас плана 136,6 процент пурнăçланă, çав вăхăтрах 24,4 процент топливо перекетленě.

Çěмěрлери коммуналлă прачечнăя (мунча тата прачечнăй хуçалăхěн директорě Клибышев юлташ, горкомхоз заведующийě Анишков юлташ) Чăваш АССР Совнаркомěн куçса çӳрекен Хěрлě Ялавне памалла тунă. Социализмлă ăмăртăва, уйрăмах палăртнă рабочисемпе инженерла-техникăла работникěсене премилеме 8 пин тенкě укçа пама йышăннă. Çав укçаран мунча тата прачечнăй хуçалăхěн директорне Клибышев тата горкомхоз директорне Анишков юлташсене 500-шер тенкě премилемелле тунă.

Çěрпӳри коммуналлă парикмахерски 1943 çулхи май тата июнь уйăхěсенчи плана 114,3 процент пурнăçланă, Совнарком çав парикмахерскине (парикмахерски директорě Петрова юлташ) иккěмěш преми пама йышăнса социализмлă ăмăртура палăрнă работникěсене премилеме 2 пин тенкě укçа памалла тунă.

Çавăн пекех Чăваш АССР Совнаркомě хуласене таса тытас тěлěшпе Çěмěрлери горкомхоз лайăх ěçленине палăртса хăварнă.

Совнарком 1943 çулхи май тата июнь уйăхěсенче Улатăр тата Канаш хулисенчи мунчасем начар ěçленине палăртнă. Асăннă хуласенчи мунчасем май тата июнь уйăхěсенче йěркеллěн ěçлесе пырайман, хăйсен планěсене пурнăçлайман. Çавăнпа та Совнарком горсовет исполкомěсен председателěсене пурăнмалли тата коммуналлă предприятисен ěçěсене лайăхлатас енěпе татăклă мерăсем йышăнма хушса хăварнă.

Тырă парса татнă

ЭЛĚК. Ураскилт ялсоветне кěрекен «Маяк» колхоз 1943 çулшăн 120 пăт тырă, 14 центнер кантăр сўсě, 56 центнер утăшăн 12 центнер тырă парса государство умěнчи обязательствăсене пěтěмěшпех тултарчě.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Совет Информаци Бюровěнчен

ИЮЛĚН 26-МĚШĚНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлěн 26-мěшěнче пирěн войскăсем ОРЕЛ енче наступлени туса пынă, 5—10 километр малалла куçнă, халăх пурăнакан 70 ытла пункта йышăнса илнě, вěсен шутěнче: Жиздры хулинчен кăнтăр-хěвелтухăçнерехре — МЕХОВАЯ, БЕРЕСТНА; Орелран çурçěр-хěвелтухăçнерехре, Ока шывěн хěвеланăç сыранěнче — МАЛОЕ РЫБИНО, КАССИНО, БОЛОБУЕВО, ШУМОВО, ОПОЛЬКОВО; Орелран кăнтăр-хěвелтухăçнерехре тата кăнтăрарахра — БОГОРОДИЦКОЕ, ДАВЫДОВО, ДУРНОВО, КОШЕЛЕВО, ОЗЕРНА, ГНУЛУША, ВЕНДЕРЕВО, ВЕРХНИЙ тата НИЖНИЙ КАМЕНЕЦ, ВЕРХНЕЕ МУХАНОВО, ЖИЗЛОВО, МОНАСТЫРЩИНА, ЧЕРНОДЬЕ, ЛОМОВЕЦ ятлă халăх пурăнакан пунктсем тата КУРАКИНО ятлă чугунçул станцийě.

БЕЛГОРОД енче разведчиксем шыраса çӳрене, уйрăм участоксенче вырăнти çапăçусем пулса пынă, çав çапăçусенче пирěн войскăсем хăйсен позицийěсене лайăхлатнă.

Кăнтăрта, Донбасра, ИЗЮМРАН КĂНТĂРТАРАХРИ тата ВОРОШИЛОВГРАДРАН КĂНТĂР-ХĚВЕЛАНĂÇНЕРЕХРИ районсенче разведчиксем вăйлăн шыраса çӳренě.

Июлěн 25-мěшěнче фронтăн мěнпур участокěсенче пирěн войскăсем нимěçсен 52 танкне персе çěмěрнě е пěтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе тăшманăн 57 самолетне ӳкернě.

☆ ☆ ☆

Орел енче пирěн войскăсем малалла наступлени туса пынă.

Орелран çурçěререхре пěр соединенин чаçěсем, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан 8 пункта йышăнса илнě. Пěр пунктра артиллерин 2 батарейине, 3 танк тата боеприпассен складне тытса илнě. Пирěн чаçсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе пăрахнă. Нимěçсен 800 çине салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă.

Орелран çурçěр-хěвелтухăçнерехре пěр соединенин боецěсем, Ока шывěн хěвеланăç сыранне каçса, гитлеровецсене сирсе пăрахнă та унта халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнě. Пирěн чаçсем пыра-пыра çапăçупе тăшман йывăр çухатусем тӳсет. Кунтаçиччен тăшманăн 6 танкне, хăй тěллěн куçса çӳрекен 4 орудине персе çěмěрнě тата нимěçсен 2000 çине салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнě, тыткăна илнисем пур.

Орелран кăнтăртарахра пěр соединенин чаçěсем нимěçсене халăх пурăнакан темиçе пунктран хěссе кăларнă, çав пунктсемшěн пынă çапăçусенче тăшманăн 1500 салтакěпе офицерне, 8 танкне, 10 орудине, артиллерин 3 батарейине тата минометсен 5 батарейине пěтерсе тăкнă. Глазуновка станцин районěнче нимěçсем совет подразделенийěсене хирěç 5 хутчен контратака тунă, анчах, вилнисене кăна шутласан та, 600 ытла салтакпа офицер çухатса, ирěксěрех каялла чакнă. Тепěр участокра гитлеровецсем халăх пурăнакан пěр пунктшăн вăйлăн тăнă. Пирěн пехотинецсене пулăшма Ладога майор командир пулса ертсе пыракан танковăй подразделени пырса çитнě. Танкистсем, хăйсен мěнпур вут-çулăмне нимěç пехоти çине тăкма тытăнса, гитлеровецсене сапаласа янă. Пирěн боецсем, танксем хыççăн пырса, тăшман салтакěсен юлашкийěсене пěтерсе тăкнă та халăх пурăнакан пункта йышăнса илнě.

* * *

Белгород енче пирěн войскăсем разведка тунă, уйрăм участоксенче вырăнти çапăçусем туса пынă. Пěр чаçăн боецěсем мелле позицисене йышăнса илнě. Малтанхи вырăна каялла таврас тесе, тăшман темиçе хутчен контратака туса пăхнă, анчах ăнăçу тăвайман. Хăйсем йышăннă позицисене çирěп тытса тăрса, пирěн боецсем нимěçсен 400 ытла салтакěпе офицерне вěлерсе пěтернě, тăшманăн 12 танкне персе çěмěрнě е çунтарса янă, тěрлě грузсем тиенě 34 автомашинине пěтерсе тăкнă. Гварди старши лейтенанчěн Рашкевич юлташăн зенитнăй батарейи кункаçиччен тăшманăн 4 бомбардировщикне персе антарнă. Старши лейтенант Белич командир пулса тăракан батарейăри зенитчиксем те нимěçсене çавăн чухлě самолетах пěтернě.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хěвеланăçнерехре разведчиксем вăйлăн шыраса çӳренě. Пěр часть, вырăнти çапăçусем туса пырса, хăйěн позицийěсене лайăхлатнă. Тăшманран 20 пулемет, 200 çине винтовка, 93 автомат, 52.000 патрон т. ыт. трофейăсем тытса илнě. Тепěр участокра пирěн подразделенисем çак кунсенче йышăннă позицисене нимěçсем каялла тытса илме хăтланнă. Тăшман контратакăпа пехотăн батальонне тата 7 танк кěртсе янă. Тамашук красноармеецпа Гусанов сержант, гранатăсем пăрахса, нимěçсен малта пыракан 3 танкне çěмěрнě. Тăшманăн ытти танкěсем каялла çавăрăннă. Танксен хӳтěлěхěсěр тăрса юлса, нимěç пехоти пысăк çухатусем тӳснě те нимěн йěркесěр каялла чакнă.

* * *

Изюмран кăнтăрарахра разведка тăвакан отрядсем активлăн кěрешнě.

Лейтенант Бондарь ертсе пыракан 4 летчик-истребитель нимěçсен истребительсем хӳтěлесе пыракан 25 бомбардировщикне атакăланă. Совет летчикěсем нимěçсен 4 самолетне персе ӳкернě, ыттисем вара, бомбисене хире пăрахса, хăвăрт тарса çухалнă.

* * *

Пирěн авиаци Баренц тинěсě çинче тăшманăн 5 транспортран, темиçе тральщикран тата сторожевой карапсенчен тăракан караванне вăйлăн пырса çапнă. Бомба тӳрремěн лекнипе нимěçсен 12.000 тонна водоизмещениллě транспорчě сирпěнсе кайса шыва путнă. Çавăн йышши тепěр транспортне вут тивертнě. Каравана хӳтěлесе пыракан тăшман истребителěсемпе çапăçса, пирěн летчиксем нимěçсен 14 самолетне персе ӳкернě.

Пирěн самолетсем çавăн пекех тата Рига заливěнче тăшманăн пěр транспортне путарнă.

* * *

Сумы облаçěнче кěрешекен партизансен темиçе отрячě минăсем лартса 15 кун хушшинче тăшманăн 9 эшелонне сирпěнтерсе янă. 9 паровоз, 51 вагон тата тěрлě çар грузěсем тиенě 39 платформа çěмěрěлнě. Кунсăр пуçне, партизансем телефонпа телеграф çыхăнăвне 6 километр тăршшě татнă. Партизансен «За Родину» ятлă отрячě нимěçсен çар эшелонне ӳпěнтерсе янă. Çав поезд çинче ларса пыракан нимěçсен фашистла оккупанчěсенчен нумай йěшěсем вилсе тата аманса пěтнě.

* * *

Нимěçсен 377-мěш пехотнăй дивизийěнчи 769-мěш полкăн 1-мěш ротинчен тыткăна лекнě ефрейтор Генрих Фелькер çапла каласа панă: «Июлěн 5-мěшěнче рота командирě — обер-лейтенант Бауман салтаксене: Белгородпа Орел районěнче наступлени пуçланă нимěç войскисем июлěн 8-мěшěнче Курскра пулаççě, терě. Анчах часах наступлени путланса ларни, гитлерла командовани Курска тытса илме тата вырăс войскисене çавăрса илме ěмěтленнисем пурте пěтсе ларни паллă пулса тăчě».

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĚН УКАЗĚ

Чи лайăх боецсемпе командирсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн Хисеплě грамотипе наградăласси çинчен

Строительство ěçěсене активлăн хутшăннăшăн чи лайăх боецсемпе командирсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн Хисеплě грамотипе наградăлас:

1. Василий Александрович **Анисимова** — сержанта.
2. Иван Федорович **Граулене** — старши сержанта.
3. Николай Иванович **Гусева** — ефрейтора.
4. Георгий Федорович **Дементьева** — старши лейтенанта.
5. Юрий Людвигович **Ендржеевскине** — старши лейтенанта.
6. Сергей Владимирович **Завойкина** — красноармееца.
7. Андрей Ильич **Лабутова** — красноармееца.
8. Григорий Феофанович **Ласкова** — старши сержанта.
9. Мариан Иванович **Нанобашвилине** — лейтенанта.
10. Иван Васильевич **Перевезенцева** — старши сержанта.
11. Владимир Николаевич **Попова** — техник-лейтенанта.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн Председателě З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарěн ěçěсене тăваканě А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи июлěн 26-мěшě.

Тылра та фронтра та çěнě çěнтерӳсем тума чěнекен приказ

Шупашкарти тир-сăран комбинатěнче ěçлекенсем Верховный Главнокомандующин приказне тулли хавасланăпа кěтсе илчěç. Приказа радио тăрăх итленě тата хаçатсенче пулнă хыççăн кашни рабочин ěçлес хастарлăхě ӳсрě.

Ěç пěтнě хыççăн комбинатра ěçлекенсем приказа сӳтсе явас шутпа митинга пухăннă. МИВО штабěн начальникě Гудкова юлташ рабочисене Сталин юлташ совет войскисене тата вěсене ертсе пыракан Рокоссовский, Ватутин, Попов полководецсене саламласа панă приказа вуласа пачě. Ун хыççăн цехсемпе уйрăм рабочисем ěç тухăçлăхне хăпартма, продукцин пахалăхне лайăхлатма хăйсем çине çěнě обязательствăсем илчěç.

Хатěрлев цехě (начальникě Ильина юлташ) уйăхри плана 130 процент тултарма пулчě.

Комбинатри 17 рабочине хěлле валли вутă хатěрлеме кайма уйăрнă. Вěсене Верих бригадир ертсе пырать. Сталин юлташăн приказěпе паллашнă хыççăн бригада вунă кун хушшинче 500 кубометр вутă хатěрлеме обязательство илчě.

Çавăн пекех Бурмистрова юлташ цехěнчи рабочисем те ěç тухăçлăхне ӳстерсе уйăхри плана чылай иртерсе пурнăçлама сăмах пачěç.

С. УТКИН,
ВЛКСМ пуçламěш организацин секретарě.

Колхозниксем Сталин юлташăн приказě çине ěçпе ответлеççě

КАЛИНИНО, июлěн 27-мěшě. **(Телефонпа).** Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалěн Сталин юлташăн приказне радиопа итленě хыççăнах Ленин ячěпе тăракан колхозри коммунист А. Пусатин, колхоз агрономě Воробьев, пуçламěш парторганизаци секретарě А. Мезенцев юлташсем уйхире тухса приказа колхозниксене ăнлантарса пачěç. Ун хыççăн колхозниксем çěнě вăйхăватпа ěçлеме тытăнчěç. Вěсем çулпуç сăмахě çине ответлесе, кăçалхи тырпула пěр тăккаламасăр, кěске срокра пухса кěртме тата государствăна срокчен тырă парса татма пулчěç. Хěрсе тырă вырнипе пěрлех, колхозниксем хатěрлев пунктне кунсерен вуншар лав тырă леçме сăмах пачěç. Çапла вара вěсем ку ěçе августăн 1-мěшě тěлне вěçлеме шутлаççě.

И. Любимовский, И. Ларина тата 64 çулхи Д. Ефимов колхозниксем çавапа тырă çулаççě. Вěсем çав кун кашниех çуршар гектар çулса нормăна ытлашшипех тултарчěç. Çавăн пекех Сталин юлташăн приказěпе хавхаланса ытти колхозниксем те ěç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççě.

Ф. РОМАНОВ,
ВКП(б) райкомěн секретарě.

Çулпуç приказě çар ěçне лайăхрах вěренме хавхалантарчě

СĚНТĚР, июлěн 27-мěшě. **(Телефонпа).** Всевобуч подразделенийě Сталин юлташăн приказне пысăк хавхаланупа кěтсе илчě.

Çулпуç приказěпе паллашнă хыççăн боецсем 110 сехетлě программăна «отлично» паллăсемпе кăна вěренсе пěтерме сăлчěç. Отделени командирě çапла каларě:

— Халě ěнтě эпир пурте çар ěçпе авал вěренсе çитрěмěр. Тепěр 7—8 кунран программăна вěçлетпěр. Çак юлашки кунсенче тататпа ытларах тăрăшса вěренсе, тěрěслӳ вăхăтěнче вăрçă техникине «отлично» пěлнине палăртăпăр. Халě тăрăшса вěренни пире хамăрăн тăван çěршывăн ирěклěхěпе чыслăхěшěн кěрешме лайăх майсем туса парě.

Сталин юлташăн приказě боецсене çěнě вăйпа вěренме хавхалантарчě.

М. КАРПОВ.

Выльăх-чěрлěх ěрчетмелли 1943 çулхи плана пурнăçа кěртрěмěр

ЧАССР Совнаркомěпе ВКП(б) Обкомне тата ЧАССР Наркомземне Матвеев, Чарыков тата Малов юлташсен ячěсемпе Элěк районěнчен çакăн пек телеграмма килнě:

«Июлěн 20-мěшě тěлне Элěк районěнчи колхозсем выльăх-чěрлěх ěрчетмелли 1943 çулхи плана пур выльăхсем енěпе те иртерсе пурнăçларěç. Уйрăмăн илсен, 1943 çулта лашасен йышне ӳстермелли плана район 103 процент, тихасем ӳстермелли плана 110 процент чухлě пурнăçларě. Çавăн пекех ěне выльăхсем енěпе те плана 102,8 процент, сыснасем енěпе 130,5 процент, вăл шутра ама сыснасем ěрчетмелли плана 102 процент, сурăхсем енěпе—122 процент, вăл шутра путек тăвакан сурăхсем çитěнтермелли плана 106 процент, чăхчěп, хур-кăвакал енěпе—101,2 процент тата хурт-хăмăр ěрчетмелли плана 130 процент чухлě пурнăçланă. Кунсăр пуçне ěç валли кастарнă вăкăрсем 314 пуç вěрентсе çитěнтернě. Район çамрăк выльăхсене контрактациллесе сутăн илмелли плана та иртерсе пурнăçларě: пěтěмпе 303 пуç пăру, 386 пуç путек туяннă. Выльăх-чěрлěх валли 5952 тонна силос хывса, ку енěпе плана районри колхозсем 124 процент тултарчěç.

Элěк райсовет исполкомěн председателě ФИЛИМОНОВ,
ВКП(б) Элěк райкомěн секретарě ФЕДОТОВ,
Райçěрěс пайěн заведующийě ВОЛКОВ».

Хěрлě Çар боецěсем валли ăшă тумтирсем пухас ěçе вăйлатмалла

Хěрлě Çар боецěсем валли ăшă тумтирсем пухас ěç тăван çěршыври халăхсемшěн патриотла тивěçлěх пулса тăрать. Ку ěçе Чăваш республикинчи ěççынисем çулсеренех пысăк çěкленӳпе туса ирттернě.

Канаш хулинчи ěççынисем кăçал Хěрлě Çар боецěсем валли кěске вăхăтрах 546 мăшăр çăм носки, 252 мăшăр кěрěк алса пухнă. Çавăн пекех Первомайски, Йěпреç, Шупашкар районěсенче те ку ěç хěрӳллěн пулса пырать.

Анчах Куславкка, Калинино, Канаш, Ишлей, Сěнтěр тата Тăвай районěсем, вăхăт сахал мар иртрě пулин те, ăшă тумтирсем пухма халě те пуçăнман-ха. Сěнтěрвăрри районěнче (ВКП(б) райкомěн секретарě А. Вахнин) 22 мăшăр кěрěк алса çěлетмешкěх лăпланса ларнă. Çитменнине вăл алсасене иртнě çул пухнă тирсенчен çеç çěлетнě.

Хěрлě Çар боецěсем валли ăшă тумтирсем пухма çěнě тимлěхпе тытăнмалла.

Вулав çурчěн ěçне йěркелемелле

Вулав çурчě хальхи вăхăтра ялти политикăллă-массăллă ěçре калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Апла пулин те, Шăхаçан районěнчи Анат Сурăм ялсоветěнче вулав çурчěн ěçне пачах та хакламаççě, унăн ěçне лайăхлатса пырас вырăнне ялăхтараççě.

Малтанхи вăхăтра кунта вулав çурчě лайăх ěçлетчě. Унта çителěклě таран кěнекесем, музыка инструменчěсем, культурăллă вăйă хатěрěсем пурччě. Вулав çуртěнче хаçат-журналсем вуласине, стена хаçачěсем кăларассине тата тěрлěрен кружоксен ěçне йěркеленěччě.

Анчах та юлашки вăхăтра вулав çурчěн ěçě пěтěмпех сӳнсе ларчě, унăн хуçалăхне кам пырса лекнě, çавă çаратма пуçларě. Халě вулав çурчěн кěнекисем çурри ытла саланса пěтнě, пěр музыка инструменчě те юлман, бильярд тавраşěсем те таçта кайса пěтнě.

Ялсовет исполкомě кун çинчен пěлет, анчах нимěнле мера та йышăнмасть. Мěншěн тесен ялсовет председателě Николаев хăй те вулав çурчěн пурлăхне илме юрататъ. Вулав çурчěн купăсě иртнě çултанпах унăн килěнче выртать, ăна ěнтě Николаевăн ачисем ватса пěтерме те ěлкěрнě. Çавăн пекех вулав çурчěн патефонне те ялсовет секретарě пулса ěçленě Т. Алексеев илсе кайнă, пластинкисене çěмěрсе тата салатса пěтернě. Пěтěмěшпе каласан, кунта вулав çуртне япăхтарса янă, унăн ěçне сӳнтерсе лартнă, çавăнпа та ялсоветěнче агитациллě-массăллă ěç калама çук япăх пулса пырать.

Анат Сурăм ялсоветěнче партин пуçламěш организацийě (секретарě М. Игнатьева) тата комсомолăн икě организацийě (секретарěсем Н. Федоровăпа К. Иванова) пур, анчах вěсем те вулав çурчěн ěçне йěркелессишěн тăрăшмаççě, вулав çурчěн хуçалăхне салатса пěтерекенсене ответ тыттарасси çинчен асă илмеççě.

Партин Шăхасан райкомěпе райсутěç пайěн çак çитменлěхсене çине тăрсах сирмелле.

Степан АСЛАН.

Уборка хӑвӑртлӑхне ӳстерер, ӗçӗн пахалӑхӗшӗн кӗрешӗр!

Тырпулсене пухса кӗртес ӗçсем хӑш районра мӗнле пыраççӗ

ЕЛЧЕК. Июлӗн 25-мӗшӗ тӗлне район-ри колхозсенче пурӗ 4.950 гектар тырӑ вырнӑ. Жнейкӑсене пурне те ӗçе янӑ, комбайнсемпе вырма тытӑнман-ха: Вырса пухнӑ 4.950 гектар тырӑран 2.495 гектарне жнейкӑсемпе вырса пухнӑ. Нумай колхозсенче колхозниксемпе колхозницӑсем пурте уйра ӗçлеççӗ, ачасем валли яслисем, столовӑйсем пур колхозсенче те организациленӗ.

* * *

ТӐВАЙ. Июлӗн 25-мӗшӗ тӗлне Тӑвай районӗ кӗрхи тырӑсен 20,4 процентне вырса пухнӑ. Вӑтам шутпа куллен 231 гектар вырса пынӑ. Анчах Тӑвай районӗнчи нумай колхозсенче тырра жнейкӑсемпе вырассине хакламаççӗ. Юсавлӑ жнейкӑсем районри колхозсенче 175 шутланаççӗ. Анчах халӗ 29 жнейкӑпа çеç выраççӗ.

* * *

ВӐРМАР. Нумай колхозсенче тырӑ вырас ӗç хӑвӑрт пулса пырать. Колхозниксемпе колхозницӑсем уйхирте пысӑк тимлӗхпе ӗçлеççӗ. Пӗтӗмӗшпе илсен, июлӗн 25-мӗшӗ тӗлне кунти колхозсем 2.100 гектар тырӑ вырнӑ, вӑл шутра жнейкӑсемпе 800 гектар вырса пухнӑ. Анчах жнейкӑсем кунта та пурте ӗçре мар-ха.

* * *

КАЛИНИНО. Июлӗн 25-мӗшӗ тӗлне кунта пурӗ 1969 гектар вырса çӗмелсене хывнӑ, ку вӑл кӗрхи тыррисен 27,7 процентӗ пулать. Калинино районӗнчи колхозсем тырӑ вырма ытти районсенчен 3—4 кун маларах тухрӗç. Çакна шута илсен, Калинино районӗ уборка ӗçӗсен хӑвӑртлӑхне кирлӗ пек ӳстерсе пыраймасть-ха. Кунта та машинӑсемпе ӗçлесси хисепре мар. Жнейкӑсемпе мӗнпурӗ те 208 гектар çеç вырнӑ.

* * *

СӖНТЕРВӐРРИ. Тырӑ вырас ӗç сӳрӗк пырать. Июлӗн 25-мӗшӗ тӗлне пурӗ те 499 гектар çеç вырнӑ. Уйра пӗр жнейка та çук. Сӗнтӗрвӑррипе Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра тырра тӑккаласа вырни палӑрать.

* * *

СӖНТӖР. Малта пыракан колхозсем тырра массӑллӑн выраççӗ, анчах «Аврора» колхоз, тырӑ пулса çитнӗ пулин те, халӗ те вырма тытӑнман.

«Красное Сормово» колхоз членӗсем икӗ кун хушшинче 32 гектар тырӑ вырчӗç, вӑл шутран 18 гектар кӗреплеллӗ çавасемпе вырса пухрӗç.

* * *

ШАМАРША. Районри нумай колхозсем кӑçал тырӑсене вырма организованно тухрӗç. Июлӗн 25-мӗшӗ тӗлне пурӗ 1280 гектар тырӑ вырса пухнӑ, ку вӑл кӗрхи тырӑсен 19 процентне вырса пухни пулать.

Кӗрхи тырӑсене М. Горький, Сталин ячӗсемпе тӑракан тата «Коминтерн» колхозсем кӗске срокра, пӗр тӑккаламасӑр вырса пӗтерчӗç.

* * *

ÇӖРПУ. Уйра мӗнпурӗ те 13 жнейка çеç ӗçлет. Ыттисем пурте ӗççӗр лараççӗ. 13 жнейкӑпа пурӗ те 96 гектар çеç вырнӑ.

* * *

Июлӗн 25-мӗшӗ тӗлне Чӑваш республикинчи колхозсенче 26.384 гектар кӗрхи тырӑ вырнӑ. Кӑçал уборка ӗçӗсем иртнӗ çулхинчен чылай маларах пуçланчӗç.

Анчах тырӑсене пухса кӗртес ӗçӗн хӑвӑртлӑхне вӑйлатса пырас пулать. Машинӑсемпе туллин усӑ курмалла. Пирӗн республикӑри колхозсенче 2707 жнейка. Мӗн чухлӗ тырӑ вырма пулать вӗсене пурне те ӗçе ярсан? Анчах халӗ жнейкӑсемпе пурӗ те 8.345 гектар ытларах çеç вырнӑ.

«Тырпулсене вӑхӑтра, ӑнӑçлӑн вырса пуçтарни — вӑрçӑ фронтӗнче пысӑк çӗнтерӳ тунипе пӗрех» (Калинин). Сакна асра тытмалла.

Тухӑçлӑ тырпул мастерӗсем

ЧКАЛОВСКОЕ. (Телефонпа). «Красный Октябрь» колхоз июлӗн 22-мӗшӗ тӗлне кӗрхи тырӑсене вырса пӗтерчӗ, халӗ çуртырри вырать, пӑрçа çулать.

Кирпичева юлташ ертсе пыракан звено кӗрхи тырӑсене икӗ кун хушшинче вырса пӗтерчӗ, тенӗр икӗ кунта илем çине кӗлте чуртарса капана хыврӗ. Ку звено ӗçленӗ участокра, малтан тӗрӗслесе пӑхнӑ тӑрӑх, ыраш гектартан 18 центнер тухни курӑнать, сӗлӗ—18 центнер, çурхи тулӑ—20 центнер, пӑри 17 центнер тухассине шанма пулать. Колхозниксем таса ӗçлеççӗ, тӑккаланчӑк пачах та çук. Ӗçе ирхине 4 сехетре тухаççӗ те, тӗттӗм пулсан кӑна ӗçрен кӗреççӗ. Кашни çын мӗнле ӗçлени куллентех курӑнса тӑрать.

Б. Абдрахманова юлташ жнейка хыççӑн кӗлте çыхрӗ, кулленех икӗ норма ытла тултарса пычӗ, 350 кӗлте çыхас вырӑнне вӑл пӗччен 740 кӗлте çыхать. С. Абгеева юлташ тырра алӑпа 0,17 гектар таран вырать, вӑлах жнейка хыççӑн кунне 720 кӗлте таран çыхать. Çапла тухӑçлӑн ӗçленипе Кирпичева юлташ ертсе пыракан звено пуян тырпула чи кӗске срокра пухса кӗчӗ, уйра пӗр пучах та хӑвармарӗ.

Иккӗмӗш звенона Якушова юлташ ертсе пырать. Звеновод пулса вӑл кӑçалхипе виççӗмӗш çул ӗçлет. Çава тухнӑранпах звено тырӑ калчисене тимлӗн пӑхса тӑчӗ, икӗ хутчен çумçумларӗ, икӗ хутчен тӗрлӗрен удобренисем парса апатларӗ, юлашкинчен акӑ халӗ тырпула лайӑх вырса пуçтарчӗ. Вӑя шеллемесӗр ӗçленин результачӗ халӗ куç умӗнче ӗнтӗ. Якушова юлташ звени ӗçленӗ участокра ыраш гектартан 19 центнер тухни палӑрать, çурхи тулӑ 23 центнер, сӗлӗ—17 центнер тухасса кӗтеççӗ. Пуринчен те лайӑххи вӗсен — çӗрулмии. Сахалтан та кӑçал çӗрулмии вӗсен гектартан 200 центнер тухать.

Халӗ тырӑ вырнӑ çӗрте Якушова юлташ хӑй кулленех жнейка хыççӑн 750-шар кӗлте çыхса пырать. Унӑн звенинче ӗçлекен Г. Валеева юлташ кулленех 765-шер кӗлте çыхать, ыттисем те ӗç нормине ирттерсе тултараççӗ.

В. КУЗЬМИН.

Жнейкӑсем лайӑх ӗçлеççӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июлӗн 26-мӗшӗ. (Хамӑр корр.). «Янмурзино» колхозра уборка ӗçӗсене пысӑк хӑвӑртлӑхпа туса пыраççӗ. Виçӗ жнейкӑпа кулленех 14-шар сехет хушши пӗр чарӑнмасӑр тырӑ выраççӗ. Машинист Г. Дмитриев юлташ талӑкри нормӑна тӑтӑшах ирттерсе тултарать. Вӑл кулленех 5 гектар вырать.

Тырра алӑпа выракансем те нормӑна тӑтӑшах тултарса пыраççӗ. Нумаях пулмасть колхозри агитаторсем колхозниксене партипе правительство «1943 çулта тырпулсене пухса кӗртесси тата ялхуçалӑх продукчӗсем хатӗрлесси çинчен» кӑларнӑ постановленине ӑнлантарса пачӗç. Колхозниксем кӑçал ку постановление тӗллӗн пурнӑçа кӗртсе пырса ялхуçалӑх ӗçӗсене ӑнӑçлӑ вӗслеме пулаççӗ.

С. ШАДИН.

Утӑшӑн тырӑ пачӗç

СОВЕТСКОЕ. Турай ялсоветне кӗрекен «Металлист» колхоз 24 гектар çинчи лайӑх ӳснӗ çарана утине çулса пӗтерсе капана хывса лартрӗ. Ун хыççӑн колхоз государствӑна утӑ памалли обязательство шучӗпе тырӑ парса плана 100 процентпех пурнӑçларӗ. Кунпа пӗрлех колхозниксем вӗлтӗрентен 44 тонна силос хывса хӑварчӗç.

Я. СИГАЕВ.

„Заготзерно" пункчӗ çӗнӗ тырӑ йышӑнма хатӗр

КУСЛАВККА, июлӗн 27-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри «Заготзерно» пункчӗ колхозниксенчен çӗнӗ тырӑ йышӑнма хатӗрленсе çитрӗ. Иртнӗ кунсенче кунта тырӑ тыткалама 3 пин михӗ юсаса хатӗрлерӗç.

14 склада пурне те юсанӑ, тасатса тӗплӗн дезинфекциленӗ. Çавӑн пекех тарасасем кирлӗ таранах пур, пурте тӗрӗс ӗçлеççӗ. Складсем патне пымалли çулйӗрсем юсавлӑ.

А. ШАРКОВ.

Комсомолецсем ертсе пыракан бригада малта

КУСЛАВККА. Катӑркассинчи «12 годовщина Октября» колхоз яланах малта пыракан колхозсен ретӗнче тӑнӑ. Пур тӗрлӗ уйхир ӗçӗсене те вӑл вӑхӑтра тата тӗплӗ туса ирттернӗ. Колхоз вӑрçӑн йывӑр условийӗсенче те пултаруллӑн ӗçлет.

Фронта кайнисен вырӑнне çамрӑксем тӑнӑ. Вӗсем вӑрçӑ кунӗ йывӑрлӑхсене ытти вӑйпитти колхозниксемпе танах хӑйсем çине илнӗ.

Пӗрремӗш бригадӑна 16 çулхи комсомолец В. Алексеев ертсе пырать. Ку бригадӑра ӗçе пурте кал-кал тухаççӗ. Ӗçкунӗсен минимумне тултарманни пӗр çын та çук.

Стахановецсен речӗ ӳссе пырать. Çураки пуçланиччен бригадӑра 2 стахановец пулнӑ пулсан, паянхи куна вӗсем 5 çынна çитнӗ. Комсомолка Челкова ку тапӑна çитсе 220 ӗçкунне ялӑн тунӑ. Вӑл пур ӗçе те тӗплӗ тума тӑрӑшать. П. Иванов комсомолец, хӑйӗн сывлӑхӗ начаррине пӑхмасӑр, куннe-çӗрне пӗлмесӗр ӗçлет.

М. ИЛЬИН.

Парти райкомӗн пленумӗ

ШӐХАСАН. (Хамӑр корр.). Темиçе кун маларах кунта ВКП(б) райкомӗн III-мӗш пленумӗ пулса иртрӗ. Пленум икӗ ыйту: парторганизацисем комсомол организацийӗсене мӗнле ертсе пыни çинчен тата вырӑнти промышленность предприятийӗсем иккӗмӗш çурçул планне пурнӑçа кӗртес тӗлӗшпе мӗнле ӗçлени çинчен сӳтсе-явӑ. Докладсене ВКП(б) райкомӗн секретарӗсем Петровпа Матвеев юлташсем турӗç.

Докладчик Петров юлташ тата прениере тухса каласакансем те районри комсомолецсемпе çамрӑксем колхоз производствинче тата предприятисенче пысӑк хастарлӑхпа ӗçленине палӑртрӗç.

«Гигант» колхозри комсомолец Василий Егоров тимӗрçӗ пулса ӗçлесе, уборка машинисене вӑхӑтра пысӑк пахалӑхпа юсаса пӗтерчӗ, транспорт инвентарӗсене юсас тӗлӗшпе колхоза активлӑн пулӑшнӑ. Иртнӗ çулта уборка вӑхӑтӗнче Егоров машиновед пулса ӗçленӗ, машинӑпа 53 гектар тырӑ вырнӑ. Вӑл кӑçал машиновед пулса тата тухӑçлӑрах ӗçлеме обязательство илнӗ.

Çавӑн пекех «Прожектор» колхозри Ж. Чистяков, «Пионер» колхозри К. Степанов, М. Васильев çамрӑксем ӗçре паха тӗслӗхсем кӑтартаççӗ. Степанова Васильев юлташсене комсомол ретне илнӗ. Кӑçал вӗсем уборкӑн малтанхи кунӗнчен пуçласах машинӑпа тырӑ вырма тытӑнчӗç.

Анчах, районӗпе илсен, комсомол организацийӗсем пур çӗрте те мар-ха кирлӗ пек ӗçлеççӗ. Районра 82 пуçламӗш организаци. Вӑл шутран колхозсенче—55, шкулсенче—15, учрежденисенче—11 организаци. Вӗсенче пурӗ 688 комсомолец шутланать. Районра 13 колхозра комсомол организаци çук, 6 организаци 4—5 уйӑх хушши ӗнтӗ секретарьсӗр пурӑнаççӗ.

Хӑшпӗр пуçламӗш парторганизацисем комсомол организацийӗсене ертсе пырас ӗç çине çиелтен пӑхаççӗ. Анат Сурӑмри, Чуракассинчи, Ямашри, Çӗнӗ Мамӑри, Энтриялӗнчи пуçламӗш парторганизацисем ку ӗçе манӑçа хӑварнӑ. Вӗсем комсомолецсемпе калаçусем ирттермеççӗ, çавӑнпа унти комсомол организацисен ӗçӗсем те япӑхнӑ. Çак комсомол организацисем кӑçалхи иккӗмӗш кварталта пӗр çамрӑка та комсомол ретне илмен. Çавна пула март—июнь уйӑхӗсенче комсомол ретне районӗпе мӗнпурӗ те 94 çамрӑк çеç хутшӑннӑ.

Районра 4 промартель, промкомбинат, пищекомбинат пур. Вӗсенче пӗринче те комсомол организацисем çук. Анчах комсомола кӗме тивӗçлӗ çамрӑксем унта сахал мар.

«Комсомол» колхозри пуçламӗш организацин секретарӗ Павлов ӗçе япӑхтарса янӑ. Çакпа пуçламӗш парторганизаци (секретарӗ Шурукова) шӗлет, анчах çитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе нимӗн те туман.

Матьшӑри «Молодой колхозник» колхозра комсомол организацин секретарӗ пулса коммунист П. Макаров ӗçлет. Вӑл организацин ӗçне лайӑхлатма тӑрӑшмасть. Комсомолецсем колхозниксем хушшинче авторитетпа усӑ курмаççӗ. Вӗсем массӑллӑ-ӑнлантару ӗçне кирлӗ пек йӗркелемен.

Парти райкомӗн пленумӗ ВЛКСМ райкомӗ комсомол организацисене çителӗксӗр ертсе пынине палӑртрӗ. Райкомол работникӗсем организацисене çулла май çеç кӗрсе тухаççӗ, конкретно ертсе пыни çук.

Вырӑнти промышленноçӑн районри предприятийӗсем иртнӗ çулсемпе танлаштарсан кӑçал лайӑхрах ӗçлени сисӗнет. Вӗсем ырӑнти чӗртавартан куллен кирлӗ таварсем туса кӑларас тӗлӗшпе пӗррремӗш çурçул планне 106 процент пурнӑçланӑ. Уйрӑмах пищекомбинат, промкомбинат тата «Сталь» промартель лайӑх ӗçлеççӗ.

Анчах хӑшпӗр артельсенче ӗç дисциплини япӑх. Рабочисем кулленхи нормӑсене тултарса пыраймаççӗ. Çавна пула «Патрон» артель çурçул планне —10 процент, «Стахановец» артель—66 процент, «VIII партсъезд» артель —50 процент çеç тултарнӑ. Артельсен ӗçне лайӑхлатас тӗлӗшпе райсовет исполкомӗн вырӑнти промышленность пайӗн заведующийӗ П. Фомин юлташ нимӗнле мера та йышӑнман. «Сталь» промартелӗн çӗвӗ çӗлекен цехӗ валли уйрӑм ӗç вырӑнӗ те çук. 6 уйӑх хушшинче çӗвӗ çӗлекен цеха 4 вырӑна куçарнӑ.

Пленум икӗ ыйту тӑрӑх та тивӗçлӗ решенисем йышӑнчӗ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Колхозсемшӗн ответлӑха туйма пӑрахнӑ ялсовечӗсем

Сӗнтӗр районӗнчи чылай колхозсем июлӗн 22—23-мӗшӗсенче ыраша суйласа вырма тытӑннӑ. Анчах Мӑн Хураçкапа Калайкасси ялсовечӗсенчи «Ядро» тата «Челюскин» колхозсем, ыраш пулса çитнӗ пулин те, вӑл кун вырма тухмарӗç. Мӗншӗн тесен вӗсем уборкӑна начар хатӗрленнӗ.

Юнашар колхозсем хӗрсех ыраш выраççӗ, анчах асӑннӑ колхозсем уборка планӗсене те туман, çурласене шӑлатман, жнейкӑсемпе молотилкӑсене юсаман.

Çак колхозсен руководителӗсем хӑйсем начар ӗçленине «кадрсем çителӗксӗр пулнипе» тата «машинӑсен запасла пайӗсем çуккипе» ӑнлантарса пама пӑхаççӗ. Çав вӑхӑтрах вӗсем ӗç вӑйне тӗрӗс вырнаçтарса тухасси, колхозниксене хирте ӗçлеме лайӑх условисем туса парасси (общественнӑй столовӑй, ача яслийӗ уçасси) çинчен манса кайнӑ.

Ку колхозсенче СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ 1942 çулхи апрелӗн 13-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленине пурнӑçа кӗртмеççӗ. Сӑлтавсӑрах ӗçкунӗсен обязательнӑй минимумне пурнӑçа кӗртмен колхозниксене судпа айӑпламаççӗ тата вӗсен пахча вырӑнӗсене илмеççӗ. Калайкасси ялсоветӗнчи «Челюскин» колхозра июнӗн 15-мӗшӗччен срокра ӗçкунӗсен обязательнӑй минимумне 4 колхозник пурнӑçламан. 41 çулхи вӑйпитти колхозница Софья Быкова 30 ӗçкунӗ вырӑнне 18 ӗçкунӗ çеç, 26 çулхи Елена Кудряшова—26 ӗçкунӗ, А. Волкова—19 ӗçкунӗ, М. Маркина—22 ӗçкунӗ çеç тунӑ. Вӗсене суд умне тӑратас вырӑнне, колхоз председателӗ Андреев юлташ Бычковӑна аванс шучӗпе 87 килограмм, Волковӑна—89 килограмм, Кудряшовӑна 123 килограмм, Маркинӑна—83 килограмм тырӑ панӑ.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ нумай пулмасть йышӑннӑ постановленире уборка умӗнхи тапхӑрта ӗçкунӗсен обязательнӑй минимумне тултарман колхозниксене аванс шучӗпе тырӑ памалла марри çинчен çирӗппӗн асӑрхаттарчӗç. Асӑннӑ колхозсен çак постановленирен хӑйсем валли тивӗçлӗ вывод тумаллаччӗ. Анчах вӑл пулмарӗ.

«Ядро» колхозра та колхозниксене аванс шучӗпе тырӑ парас ӗçре çитменлӗхсем нумай. Аванс памалли йӗркене пӑсни, паллах, тӳрӗ кӑмӑлпа ӗçлекен колхозниксене пӑшӑрхантарать.

Кунсӑр пуçне асӑннӑ колхозсенче ялхуçалӑх уставне пӑсаççӗ. Акулина Дубинкинӑпа Александра Волкова колхозницӑсем хӑйсен хуçалӑхӗнче икшер ӗне, виç-тӑватшар пӑру-вӑкӑр усраççӗ. Çав вӑхӑтрах вӗсем колхозра çителӗксӗр ӗçлеççӗ.

Колхозсенче общественнӑ пурлӑха сыхлас ӗçе начар организациленӗ.

Çак колхозсенчи çитменлӗхсене ялсовет исполкомӗсем тата вӗсен председателӗсем пӗлсе тӑраççӗ. Анчах вӗсем общественнӑ хуçалӑха аталантарас, колхозсене организацилӗх тӗлӗшӗнчен çирӗплетсе пырас ӗçре вырӑнти власть вӑйӗпе кирлӗ пек пулӑшса тӑмаççӗ. Пӗр сӑмахпа каласан, вӗсем хӑйсен ялсовечӗсенчи колхозсемшӗн ответлӑха туйма пӑрахнӑ.

Сӗнтӗр райсовет исполкомӗн Калайкасси тата Мӑн Хураçка ялсовечӗсем çине халех тивӗçлӗ пек çавӑрӑнса пӑхмалла.

М. ПРОХОРОВ.

Фронтпа çӗршыва ытларах продукци парассишӗн

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Комбинатра кировецсен чӗнӗвне сӳтсе-явас майпа кашни цехрах митингсем пулса иртрӗç. Рабочисемпе работницӑсем кировецсен пуçарӑвне ырласа, малалла татах та тухӑçлӑрах ӗçлеме пулчӗç, хӑйсем çине татӑклӑ обязательствӑсем илчӗç. Стахановец Шварцбройд юлташ задание кашни куллен 300 процент пурнӑçлама пулса, митингра çапла каларӗ:

— Сталин юлташ фронтшӑн икӗ хут ытларах вӑй хурса ӗçлеме хушнӑ пулсан, вӑл пирӗншӗн боевой приказ пулса тӑрать. Пирӗн çав приказа тивӗçлипе пурнӑçлассишӗн кӗрешмелле,—тет вӑл. Черныш стахановец та ӗç нормине 350 процент тултарма пулчӗ.

Завод коллективӗ çулталӑк планне Сталинла Конституци кунӗ тӗлне пурнӑçлама, ӗç тухӑçлӑхне планпа палӑртниччен 10 процент ӳстерме, продукци хӑйне ларакан хакне 10 процент чакарма, хӗле планран ирттерсе 15 пин кубометр вутӑ хатӗрлеме обязательствӑсем илчӗ.

— Фронтпа çӗршывшӑн нимӗн хӗрхенмесӗр ӗçлетпӗр. Ылханлӑ тӑшмана çӗнтерес ӗçе пӗтӗм вӑйхала хуратпӑр, —теççӗ заводри рабочисемпе работницӑсем.

И. ПЕТРУЧЕНКО,
Партбюро секретарӗ.

Стена хаçачӗ тивӗçлӗ вырӑнта

ИШЛЕЙ. «Красный пахарь» колхоз сумӗнче нумайранпа «Вӑйлӑ тырпулшӑн» ятлӑ стена хаçачӗ тухса тӑрать. Вӑл 1943 çулта 7 номер тухнӑ. Юлашки номере уйри тырпула пухса кӗрес тата ӗçкунӗсен минимумне тултарас пирки çырнӑ материалсене ытларах кӗртнӗ. Хаçат колхозниксен производствӑри ӗçтухӑçлӑхне ӳстерме пулӑшрӗ. Кунсӑр пуçне, кашни бригадӑрах боевой листоксем тухаççӗ, хаçатра «Хисеп хӑми» организациленӗ.

М. ПУЛЬКОВ.

Ют çӗршывсенче

Италири лару-тӑру

Муссолини отставкӑна тухни çинчен

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Лондонри корреспонденчӗ çапла пӗлтерет: Американӑри паллӑ ушкӑнсен шухӑшӗпе, Муссолини отставкӑна тухнӑ сӑлтавсем çакӑн пек пулмалла. Вӑл Гитлертан Италие пулӑшу пама ыйтнӑ. Анчах та Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче Хӗрлӗ Çар хӗссе пынӑ пирки, Гитлер çав пулӑшӑва памашкӑн килӗшме пултарайман. Çапла шухӑшлаççӗ: Муссолини отставкӑна тухни Венгрипе Румыния нимӗçсем вӗсенчен фронта çӗнӗ çарсем яма ыйтнине хирӗç тӑрассипе самаях вӑйлатӗ, теççӗ.

ЛОНДОН, июлӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви çакна паллӑ туса пӗлтерет: Муссолини отставкӑна вӑл çак кунсенче Гитлерпа курнӑçса калаçнӑ хыççӑн тухнӑ теме сӑлтавсем пур пулмалла. Питех те çакӑн пек туйӑнать: Гитлер Муссолинирен ыйтнӑ пулӑшӑва пама килӗшмен пулмалла. Муссолини отставкӑна тухни Италин пурнӑçӗ вӗçне çитиччченех çивӗчленсе çитнин результачӗ. Ку ӗç вӑл—Гитлера питӗ йывӑррӑн пырса çапни пулса тӑрать.

Бадольо Италире вӑрçӑри пек лару-тӑру туса хунӑ

ЖЕНЕВА, июлӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Римри радио паян Бадольо чӗнсе каланине панӑ. Бадольо çав чӗнсе каланинче Италире вӑрçӑри пек лару-тӑру туса хуни çинчен пӗлтерет. Унта çапла каланӑ: Италире пухусем тума пачах чарнӑ, халӑх ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пухӑнма пуçласанах çав халӑха салатса яма государство влаçӗсене приказ панӑ. Халӑх хушшинчи йӗркелӗхе тытса тӑма çар влаçӗсене хушнӑ. «Демонстрацисене çӳремелли вӑхӑт мар халӗ,—тенӗ чӗнӳре,—мӗншӗн тесен демонстрацисем тума чарса лартнӑ».

Чӗнӳ хыççӑн Римри радио Бадольо приказне панӑ. Приказра çапла каланӑ: çар корпусӗсемпе тип çӗр çинчи оборона командующийӗсем çине «халӑх хушшинчи йӗркелӗхе тытса тӑрас ӗçе» хунӑ, «закона пӑхӑнман çынсене пурне те йӗркене кӗртмешкӗн ӑçта кирлӗ, çавӑнта пур çӗрте те вӑй ӗçе кӗрет». Малалла приказра çапла каланӑ: государствӑн пӗтӗм хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсем, полици тата милици пурте Бадольо аллине куçаççӗ. Халӑха кас пулас умӗнхи вӑхӑтран пуçласа тул çутӑлаччен пӳртсенчен тухма чарнӑ. Автомобильсемпе тата моторлӑ лодкӑсемпе усӑ курма чарса лартнӑ. Ун пек транспортпа власть представителӗсем кӑна çӳреме пултараççӗ. Курӑнмалли вырӑнсенче пичетленӗ е алӑпа çырнӑ афишӑсене е кирек мӗнле пӗлтерӳсене те çакма чарнӑ. Кирек мӗнле сигналсем те—çутӑпа е тӗкӗрсемпе—пама чарнӑ. Хӗçпӑшал тытма ирӗк панӑ хутсене пурне те пӑрахӑçа кӑларнӑ. Пӳрт-çуртсенче урамалла тухакан алӑксене кӑнтӑрла та, каçхине те питӗрсе тӑратма юрамасть.

Юлашкинчен приказра çапла каланӑ: çарсем, патрульсем, государство влаçӗн представителӗсем çак приказа пурнӑçа кӗртес тӗлӗшпе кирлӗ чухне хӗçпӑшала ӗçе яма пултараççӗ. Приказа пӑхӑнмасӑр тӑракансене пурне те тытса военнӑй трибуналсен судне памалла.

Бадольо правительстви

ЖЕНЕВА, июлӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Римри радио çапла пӗлтерет: Бадольо çӗнӗ кабинет тунӑ. Унта ӗлӗкхи составран çар производствин министрӗ генерал Карло Фавагросс кӑна юлнӑ. Çӗнӗ кабинетра ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗ вырӑнне Раффаэле Гуарилья йышӑннӑ.

Миланри юнлӑ пӑлханусем. Италин пысӑк хулисенчи демонстрацисем

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Хаçатсенче пӗлтернӗ тӑрӑх, иртнӗ каç Миланра юнлӑ пӑлханусем пулса иртнӗ. Нимӗçсем халӑх çине тупӑсемпе пенӗ пулмалла. Миланпа Швейцари хушшинчи телефонлӑ çыхӑну татӑлнӑ.

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пӗлтерет: американецсем Палермӑна йышӑннӑ хыççӑн Римра, Венецире, Миланра, Туринра, Флоренцире тата Триестра урамсенче нумай халӑхлӑ демонстрацисем пулса иртнӗ. Пӗтӗм Италийӗпех забастовкӑсен хумӗ анлӑн сарӑлса кайнӑ.

Сицилири вӑрçӑ ӗçӗсем

ЛОНДОН, июлӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Сицили утравӗ çинчи 11 аэродрома халӗ ултташӗ союзниксен аллинче.

Термини портне тытса илнӗ хыççӑн союзниксем Палермӑран 80 километр хӗвелтухӑçнелерехре ларакан Чефалу хулине йышӑннӑ. Тӑшман ку районра питӗ вӑйсӑр хирӗç тӑрать.

Юлашки хыпарсем тӑрӑх, американецсен 7-мӗш аримийӗ тата 7000 çынна ытла тыткӑна илнӗ, вӗсен шутӗнче темиçе генерал.

Июлӗн 25-мӗшӗнче çӗрле акӑлчансен тинӗс флочӗн соединенийӗ Сицилин хӗвелтухӑç çыранӗнчи Таормина гаваньне атакӑланӑ.

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат пӗлтернӗ тӑрӑх, США çар министрӗн ӗçӗсене туса тӑракан Паттерсон çапла каланӑ: Сицили утравӗ çинчи кампани хӑйӗн татӑклӑ тапхӑрне çитрӗ. Утрава пӗтӗмӗшпех оккупацилесси часах вӗçленмелле. Паттерсон çакна пӗлтернӗ: Сицили утравӗ çине кӗрсе кайма пуçланӑ чух чи малтан 250 транспорт самолечӗ çинчен американецсен 5000 парашютистне ытла антарнӑ. Çакӑ вӑл парашютистсем антарас тӗлӗшпе вӑрçӑ пуçланнӑранпа пулса иртнӗ пысӑк операцисенчен чи пысӑкки пулса тӑрать. Америка парашютисчӗсемпе пӗр вӑхӑтрах планерсемпе Англи войскисем аннӑ. Сывлӑшри пехотӑн операцийӗсем питӗ ӑнӑçлӑн пулса пынӑ.

Паттерсон каланӑ тӑрӑх, Сицили утравӗ çинчи тӑшман хирӗç тӑрасси союзниксем кӗтнинчен вӑйсӑртарах пулнӑ. Ку пӗр енчен союзниксем тапӑнни тактика тӗлӗшпе кӗтмен çӗртен пуçланса кайнинчен килнӗ ӗнтӗ.

Датчансемпе гитлерла оккупантсем хушшинчи тытӑçусем

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пӗлтернӗ тӑрӑх, Дани халӑхӗпе нимӗç оккупанчӗсем хушшинчи пурнӑç питӗ начар. Июль уйӑхӗнче датчансемпе гитлеровецсем хушшинче темиçе пысӑк тытӑçу та пулса иртнӗ. Акӑ çак эрнере те Копенгагенра нимӗç морякӗсемпе хулари гражданла халӑх хушшинче юнлӑ тытӑçусемех пулса иртнӗ, 14 çынна вӑйлах амантнӑ.

Союзниксен авиацийӗ Германие, Бельгие, Голландие тата Франците тапӑнни

ЛОНДОН, июлӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер Америка бомбардировщикӗсен пысӑк соединенийӗсем нимӗçсен Варнемюнде тата Гамбург хулисенчи авиаци завочӗсене, Вустроври гидросамолетсен базине тата Кильри верфьсене атакӑланӑ. Нумай çӗрте пушарсем тухнине тата взрывсем нумай пулнине палӑртнӑ. Тӑшман вӑйлӑн хирӗç тӑнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тӑшман самолечӗсене нумай пӗтерсе тӑкнӑ.

Англи авиацийӗ тӑшманӑн Голландири, Бельгири тата Çурçӗр Францири чылай объекчӗсене атакӑланӑ. Çак мӗн пур операцисенчен 26 самолет хӑйсен базисене таврӑнман.

Июлӗн 25-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле тата ӗнер союзниксен авиацийӗ Сицили утравӗн çурçӗр-хӗвелтухӑç пайне темиçе хутчен те пыра-пыра тапӑннӑ.

ЧАССР прокуратуринче

Çӗмӗрле районӗнчи «Малалла» колхоз членӗсем Томышковӑпа Иванова колхоз уйӗнчи пучахсене 26 килограмм касса вӑрланӑ. Çакӑншӑн Томышковӑпа Ивановӑна арестлесе суда панӑ.

Хӗрлӗ Чутай районӗнчи «Хӗрлӗ маяк» колхоз членӗсем А. Беловӑпа В. Терентьева «Совет» колхоз хирӗнчен 10 килограмм пучах вӑрланӑ. Çакӑншӑн вӗсене те уголовнӑй йӗркепе ответ тыттарнӑ.

Вӑрмар районӗнчи «Аниш» колхоз членӗ Е. Филиппова колхозӑнне 8 килограмм пучах вӑрланӑ. Колхоз тыррине вӑрланӑшӑн Филипповӑна суда панӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
июлӗн 24-мӗшӗнчен пуçласа кашни кун саслӑ илемлӗ
ОНА ЗАЩИЩАЕТ РОДИНУ
ятлӑ çӗнӗ фильм кӑтартать.
Сеанссем çак вӑхӑтра пуçланаççӗ: 12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.
Часах
В старом Чикаго
ятлӑ фильм кӑтартма пуçлаççӗ.

Лесоохрана Управленине экономист, машинистка тата делопроизводитель кирлӗ.
Çак адреспа ыйтса пӗлмелле: Шупашкар хули, Урицкий урамӗ, 36.
2—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, парти пурнӑç пайӗн—3—99, промышленноçпа ялхуçалӑх пайӗн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.

НТ 1787